27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 сус.

1945 ФЕВРАЛЬ 7 ЮНКУН 24(6775) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ЧĂВАШ КОММУНИ

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТАШУПАШКАР ХУЛАСОВЕЧĔН ХАСАЧĔ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Украинăри 1-мĕш фронт çарĕсен командующине

Совет Союзĕн Маршалне КОНЕВА

Фронт штабĕн начальникне

Арми генералне СОКОЛОВСКИЕ

УКРАИНАРИ 1-мĕш фронт çарĕсем, малалла наступлени туса пырса, БРЕСЛАУ (БРЕСЛАВЛЬ) хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăç енерехре ОДЕР шывĕ урлă каçнă, шыв хĕвеланăç сыранĕнче нимӗссен нумай вăхăт ăна вăйлăн тĕреклетнĕ оборонине татса кĕнĕ те, виçĕ кун хушши çапăçса наступлени туса пырса, 20 километра çити малалла кайнă, тытса илнĕ плацдарма фронт тăршшĕпе 80 километра çити сарнă.

Наступлени тунă вăхăтра фронт çарĕсем ОЛАУ, БРИГ, ТОМАСКИРХ, ГРОТТКАУ, ЛЕВЕН тата ШУРГАСТ хулисене—çулăĕрсен паха узелĕсене тата нимӗссен ОДЕР шывĕн хĕвеланăç сыранĕнчи оборонин вăйлăн тĕреклетнĕ пункчĕсене—тытса илнĕ.

ОДЕР шывĕ урлă каçнă чухнехи çапăçусенче çаксем чапа тухнă: ГУСЕВ генерал-полковникăн, ЖАДОВ генерал-полковникăн, БУХОВЕЦ генерал-лейтенантăн, ЛЯМИН генерал-майорăн, НОВОСЕЛЬСКИЙ генерал-лейтенантăн, НАУМОВ генерал-майорăн, ЛЕБЕДЕНКО генерал-лейтенантăн, РОДИМЦЕВ генерал-лейтенантăн, ДОЛГОВ полковникăн, СУХАРЕВ полковникăн, КУЗНЕЦОВ полковникăн, ПЕСОЧИН полковникăн, ЗИНОВЬЕВ полковникăн, ЗАЙОНЧКОВСКИЙ генерал-майорăн, ГОРЯЧЕВ полковникăн, ШУМЕЕВ полковникăн, МОТОВ генерал-майорăн, ОЛЕЙНИКОВ генерал-майорăн çарĕсем; артиллери генерал-лейтенанчĕн МИХАЛКИНАН, артиллери генерал-майорĕн ПОЛУЭКТОВ АН, артиллери генерал-майорĕн КОФАНОВАН, артиллери генерал-майорĕн САНЬКОН, ГОРДЕЕВ полковникăн, ТАРАСОВ полковникăн, артиллери генерал-майорĕн ГУДКОВАН, ЧЕВОЛ полковникăн артиллеристăçсем; РЫБАЛКО генерал-полковникĕн, танковăй çарсен генерал-майорĕн БАХМЕТЬЕВАН, танковăй çарсен генерал-майорĕн КУЗНЕЦОВАН, танковăй çарсен генерал-лейтенанчĕн ПОЛУБОЯРОВАН, танковăй çарсен генерал-майорĕн НОВИКОВАН, танковăй çарсен генерал-майорĕн ИВАНОВАН, танковăй çарсен генерал-лейтенанчĕн СУХОВАН танкистăçсем; авиаци генерал-лейтенанчĕн РЯЗАНОВАН, авиаци генерал-лейтенанчĕн УТИНАН, МАЧИН полковникăн летчикĕсем; ГРОМЦЕВ полковникăн, ПОДОЛЫННЫЙ полковникăн, КАМЕНЧУК полковникăн сапĕрĕсем; ШЕЛАМЫТОВ полковникăн, БОГОМОЛОВ полковникăн, БОРИСОВ полковникăн связистăçсем чапа тухнă.

Тунă çĕнтĕрĕве яланлăхи паллăртса хăварас тесе, ОДЕР шывĕ урлă каçнă чухнехи çапăçусенче уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе частьсене «ОДЕРСКИ» тесе ят панă тата орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, февралĕн 6-мĕшĕнче, 22 сехетре пирĕн Тăван çĕршыв столици МУСКАВ, икçĕр çирĕм тăвата тупăпа çирĕм хут пĕр харăс персе, Украинăри 1-мĕш фронтăн паттăр çарĕсене, ОДЕР шывĕ урлă каçнăскерсене, Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан çарсене, ОДЕР шывĕ урлă каçнă тата БРЕСЛАУ хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре плацдарм тытса илнĕ чухнехи çапăçусенче пулăшскерсене, питĕ чаплă çапăçнăшăн ТАВ ТАВАТАП.

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕне ни кама пăхăнмалăхĕшĕн çапăçса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене—вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1945 çулхи февралĕн 6-мĕшĕ. № 270.

Совет Союзĕнчи Хĕрлĕ Хĕрес Общести Польша халăхне пулăшни

Хĕрлĕ Хĕреспе Хĕрлĕ Çуруйăх Обществи Исполкомĕ Польша Республикин Вăхăтлăх Правительстви ячĕпе икĕ ушкăн медикаментсем, çыхмалли япаласем тата медицина инструменчĕсем янă. Вĕсене Польшăн нимĕç оккупацийĕнчен ирĕке кăларнă районĕсенчи халăх валли янă.

Посылкăсенче хирурги операцийĕсем тумалли инструментсем, рентгенографи пленкисем, тытамак тытассине тата дифтерита пĕтермелли сывороткăсем, медикаментсем тата çыхмалли япаласем пур.

Польша республикин Вăхăтлăх Правительстви премьер-министрĕ Э. Осубка-Моравский господин Хĕрлĕ Хĕреспе Хĕрлĕ Çуруйăх Обществи Исполкомĕн председательне С. А. Колесников юлташа çыру янă. Вăл çырура çапла каланă:

«Хĕрлĕ Хĕреспе Хĕрлĕ Çуруйăх Обществи нимĕçсен фашистла пусмăрĕнче хĕн курнă поляк халăхне медикаментсем, инструментсем тата çыхмалли япаласем ярса панăшăн Сире чун-чĕререн тав тăватăп. Эсир панă пулăшăва Польша общественноçĕ пĕтĕм чун-чĕререн йышăнать». (ТАСС).

Сывлăшран тата химипе тапăнассинчен сыхланас тĕлĕшпе иртекен Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăрту

1945 çулхи февралĕн 1-мĕшĕпе апрелĕн 1-мĕшĕ хушшинче сывлăшран тата химипе тапăнассинчен сыхланас тĕлĕшпе Осоавиахим организацийĕсен Пĕтĕм Союзри ăмăртăвĕ пулса иртет.

Осоавиахимăн Центральный Советĕ çирĕплетнĕ инструкци тăрăх, районсенче ăмăртава ертсе пыма партипе совет, комсомолпа профсоюз, общество организацийĕсен тата сывлăшран тапăнассинчен сыхланас тĕлĕшпе ĕçлекен организацисен представителĕсенчен комиссисем тăваççĕ. Вĕсене пулăшма Осоавиахим организацийĕсем штатра тăракан работниксене уйăраççĕ.

Ăмăртăва хутшăнакан коллективсенче çак ĕçсене тумалла: противогаз тăхăнса пĕр сехет çурă хушши ĕçлемелле е противогаз тăхăнса 5 километра çити каймалла; халăха сывлăшран тапăнассинчен сыхланас ĕçе ĕçсыннисене ытларах явăçтармалла: массăллă ĕçе (докладсем, лекцисем, калăçусем ирттересшĕне, киносем кăтартассине тата ытти сене те) лайăх паха халăхпа ирттермелле. Кусемсĕр пуçне хăшпĕр коллективсенче вĕренӳсем ирттермелле пулать.

Ăмăртура кам малă тухнине çулерех асăннă ĕçсене мĕнле пурнăçа кĕртни тăрăх палăртаççĕ.

Ăмăртура малă тухакансене пама СССР Осоавиахим Центральный Советĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне тата лайăх работниксене пама «За активную оборонную работу» значок тунă.

Халиччен иртнĕ Пĕтĕм Союзри ăмăртăва пирĕн республикăра 217.000 çын хутшăннă. Ăмăртура Шупашкар, Элĕк тата ытти хăшпĕр районсем паха тĕслĕхсем кăтартнă.

Кăçал пирĕн республикăн ăмăртура пĕрремĕш вырăна тухма кирлĕ условисем çителĕклĕ таранах пур. Тăрăшса ĕçлесен, эпир малă тухма пултаратпăр.

И. ШВЕДКО,
Осоавиахимăн Чăваш республикинчи Центральный Совечĕн ПВХО отделĕн начальникĕ.

ФРОНТРИ БРИГАДАСЕН ĔÇĔСЕНЕ ПАХСА ТУХНИ

Февралĕн 3-мĕшĕнче Мускавра, Хĕрлĕ Çăран Тĕп суртĕнче, вăрçăн малтанхи кунĕсенчен пуçласах Çапăçури Çăран часĕсенче тата Тинĕс-Çар флотĕнче ĕçлекен художествăллă бригадăсен ĕçĕсене пăхса тухма пуçланă.

Вăл ĕçе Пĕтĕм Союзри концерт пĕрлешĕвĕн мастерĕсем 200 сынна яхăн хутшăннă. Фронтра вĕсем 25.000 концерта яхăн панă. Вăл артистсенчен нумайĕшне орденсемпе медальсем парса наградăланă. Бригадăсенче Сталинград, Ленинград хулисене тата Кавказа хӳтĕлес ĕçе хутшăннă сынсем нумай. Унта çамрăксем те сахал мар. Фронт эстрадине вĕсем художествăллă пултарулăх кружокĕсенчен, театрсемпе циркscенчен тата театр шкулĕсенчен пынă. (ТАСС).

Тухăçлă тырпулшăн кĕрешетпĕр

КУКЕС. Çĕре вырăнти удобренисемпе çемçетни вăйлă тырпул туса илме питех те пулăшать. «Красный флот» колхоз хире 800 лав тислĕк кăларчĕ, 350 лав фекали пухрĕ. «Çăлту» колхоз хире 500 лав тислĕк турттарнă, 40 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухнă. «Стрела» колхоз хире 700 лав тислĕк кăларнă.

Вырăнти удобренисем хатĕрлес тĕлĕшпе Шурккари «Победа» колхозри комсомолецсемпе çамрăксем питех те хастарлăн ĕçлеççĕ. Вĕсем хире 500 лав тислĕк турттарнă, 31 центнер кĕл тата 23 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухса хатĕрленĕ.

Çавăн пекех «Осоавиахим», «Правда», «Малалла», Ворошилов ячĕпе тăракан тата ытти колхозсенче те вырăнти удобренисем хатĕрлес ĕç аван пырать.

Вăйлă тырпулшăн кĕрешни—çĕнтерӳшĕн кĕрешни. Çакна асра тытса ĕçлеççĕ пирĕн колхозниксем.

А. АЛЕКСЕЕВ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

ФЕВРАЛĔН 5-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Февралĕн 5-мĕшĕнче пирĕн çарсем КЕНИГСБЕРГ хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре Земланд çурутравне тăшмантан тасатасшăн çапăçнă, халăх пурăнакан темиçе пункта туртса илнĕ, вăл шутра—ВАТЦУМ, ГРОСС ЛЯДТКАЙМ, ТИРЕНБЕРГ, КАЛЛЕН, ПОВАЙЕН ятлă пысăк ялсем. ОДЕР çинчи ФРАНКФУРТ хулинчен çурçĕртерехре тата кăнтăр-хĕвелтухăçне рехре пирĕн çарсем çапăçса ОДЕР шывĕ çине тухнă, ГЕРИТЦ хулипе чугун çул станцине тата халăх пурăнакан ытти 100 пункта ытла туртса илнĕ, вăл шутра—ЦЕЛЛИН, НОЙМЮЛЬ, АЛЬТ ШАУМБУРГ, ТИРПИТЦ, РАЙПЦИГ, МАЧДОРФ, РАМПИТЦ, ШЕНФЕЛЬД, ГЮНТЕРОБЕРГ, РЕДНИТЦ ятлă пысăк ялсем.

ПОЗНАНЬ хулинче пирĕн çарсем хупăрласа илнĕ тăшман гарнизонне пĕтерсе тăкасшăн çапăçнă. Пирĕн наступлени туса пыракан часçем хулари хĕçпăшал заводне туртса илнĕ, заводра 58 тупă, 1.250 çăмăл пулеметпа станковăй пулемет, 130 автомат тата 1.500 винтовка тытса илнĕ.

БУДАПЕШТРА пирĕн çарсем хупăрласа илнĕ тăшман гарнизонне пĕтерсе тăкасшăн çапăçнă, 16 квартал туртса илнĕ.

БУДАПЕШТРАН кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем, атакăсем туса, ШЕРЕГЕЛЬЕШ, ШАРАШД, АБА, ШАРКЕРЕСТУР, СИЛАШ-БАЛХАШ ятлă пысăк ялсене туртса илнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведчиксем шыраса çӳренĕ тата чылай пунктра тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă.

Февралĕн 4-мĕшĕнче нимĕçсен 136 танк не çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитчăй артиллери тăшманăн 56 самолетне персе çакнă.

☆ ☆ ☆

Кенигсберг хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем Земланд çурутравне нимĕçсенчен тасатнă. Шыв хĕррипе анăç вырăна хĕстерсе лартнă гитлеровецсем хыта хирĕç тăнă. Совет часĕсем çапăçса малалла куçса пынă, вăйлă çирĕплетнĕ темиçе яла туртса илнĕ. Пĕр участокра нимĕçсем темиçе хутчен те контратака тунă, вĕсем унти çапăçăва хăйсен пехотине танкĕсен пысăк вăйĕсене кĕртсе янă. Пирĕн артиллеристсемпе пехотинецсем тăшман контратакисене сирсе янă, тăшман пехотине пĕр полка çити тата 54 танк пĕтерсе тăкнă. Кун каçиччен нимĕçсенчен 30 танкпа хăй тĕллĕн çӳрекен тупă, 3 самолет, 186 хир туппи, 267 пулемет тата 1.160 автомашина тытса илнĕ. 1.600 нимĕç салтак, кĕпе офицерне тыткăна илнĕ.

* * *

Одер çинчи Франкфурт хулинчен çурçĕртерехре тата кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн çарсем тăшман хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкнă та Одер шывĕ çине тухнă. Нимĕçсен темĕн чухлĕ ушкăнĕсене шыв хĕрине хĕстерсе лартса пĕтерсе тăкнă. Кюстрин ятлă нимĕç крепоçĕнчен виçĕ километр çурçĕр-хĕвеланăçнерехре ларакан Альт Шаумбург ялне туртса илнĕ. Пирĕн ытти чассем Одер шывĕ çинче Кюстрин крепоçĕнчен 10 километр кăнтăртарахра ларакан Геритц хулине туртса илнĕ. Нимĕçсен 25-мĕш моторизованнăй дивизийĕ пысăк çухатусем тӳснĕ, унăн нумай сын вилнĕ тата тыткăна лекнĕ. Çав дивизие халь çеç хĕвеланăç фронтĕнчен Совет Союзĕпе Германи фронтне куçарса килнĕ пулнă. Пĕр районра пирĕн утлă çар часĕсем хупăрласа илнĕ тăшман ушкăнне пĕтерсе тăкнă. Вăл ушкăн уччен аркатса тăкнă нимĕç дивизийĕсен подразделенийĕсенчен тăнă. Кун каçиччен пирĕн çарсем 5.000 нимĕç салтакĕпе офицерне ытла вĕлерсе пĕтернĕ. Трофейсем нумай тытса илнĕ, вăл шутра—70 тупă, 200 пулемет тата çар пурлăхĕн 18 пысăк складĕ. 1.350 пимӗçе тыткăна илнĕ.

* * *

Будапешт хулин хĕвеланăç пайĕнче пирĕн çарсем хупăрласа илнĕ тăшман группировкине пĕтерсе тăкасшăн çапăçнă. Нимĕçсен аллинче тăрса юлнă хулă районĕсем çуллĕ вырăнсенче лараççĕ, вĕсем хӳтĕлеме меллĕ район пулса тăраççĕ. Тăшман кашни чул çурта çирĕплетнĕ, хирĕç тăрса çапăçмалли тĕреклĕ пункт туса хунă. Совет артиллеристăçсем, тӳррĕн персе, тăшман укрепленийĕсене ише-ише антараççĕ, унăн персе тăмалли вырăнсене пусара-пусара лартаççĕ. Çакăн хыççăн вара пирĕн штурмлакан ушкăнсем çуртсене, урамсене гитлеровецсенчен тасатаççĕ. Гварди капитанĕ Варыгин тата гварди старши лейтенанчĕ Воронков ертсе пыракан артиллеристсем çĕрлехи çапăçура пирĕн пехотăна малалла кайма кансĕрлесе тăракан тăшманăн перси тăракан вуăн вырăнне пĕтерсе тăкнă. Гварди старши сержанчĕсем Булычев, Конев тата Любимов ертсе пыракан минометчиксем нимĕçсен хăй тĕллĕн çӳрекен икĕ туппине перси çĕмĕрнĕ тата тăшман автоматчикĕсен пысăк ушкăнне сапаласа янă. Хайрулин капитанăн боецĕсем тăшмана пĕр пысăк çуртран хăваласа кăларнă. Нимĕçсем ку çуртран хăйсен оборонин тĕреклетнĕ пысăк пунктне туса хунă. Темиçе вунă нимĕçе вĕлернĕ.

* * *

Будапештран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем тăшмана аткăланă та вăйлă çирĕплетнĕ позицисене туртса илнĕ. Çав позицисене каялла туртса илме хăтланса, гитлеровецсем темиçе контратака тунă, анчах та вĕсене кашнинчех каялла хăваласа янă. Тăшман контратакисене сирсе янă чухне пирĕн артиллеристсемпе бронебойщиксем тăшманăн 35 танкне тата 15 бронетранспортерне çунтарса янă е перси çĕмĕрнĕ.

Совет воинĕсем нимĕç захватчикĕсемпе хăюллăн та паттăрăн çапăçаççĕ. Пшеничников офицер ертсе пыракан танк экипажĕ пĕр тытăçура нимĕçсен «Пантера» ятлă тăпкине тата 4 бронетранспортерне персе çĕмĕрнĕ. Гварди рядовойĕ бронебойщик Григораш тăшманăн хăй тĕллĕн çӳрекен туппине пĕтерсе тăкнă. Гварди сержанчĕ Анисимов ертсе пыракан тунă расчечĕ тăшман атакине сирсе янă чухне нимĕçсен икĕ танкне персе çĕмĕрнĕ, хăйсен позицине çăлса хăварнă. Хăйсен аэродромне тавăрнă чухне пирĕн летчиксене—Долгов лейтенантпа Курицдзе кĕçĕн лейтенанта—нимĕçсен 6 истребителĕ тапăнă. Гитлеровецсем Курицдзе самолетне атакăланă. Долгов лейтенант хăйĕн юлташне пулăшма васкаса çитнĕ те тĕл персе нимĕç истребительне çĕре ӳкернĕ. Кун хыççăн Долгов лейтенантăн самолечĕ çинчи старши сержант Мартынов нимĕçсен тата икĕ самолетне персе ӳкернĕ. Пирĕн штурмовиксем хăйсен аэродромне чиперех анса ларнă.

* * *

Хĕвелтухăç Прусине нимĕçсен Рихтер капитанне тыткăна илнĕ. Çав капитан çапла каласа кăтартнă: «Эпĕ унтер-офицерсен шкулĕнче тактика вĕрентеттĕм. Нумай пулмасть пирĕн шкула хыпаланса фронта ячĕç, мана шкул командирне лартрĕç. Нимĕçсен командованийĕ Дайме шывĕ çинчи оборонăна никам та çĕнтерейрес çук, вăл участокра вырăссем малалла кайма пултарайрас çук тесе шутланă, ытти сене те çапла ĕнентернĕ. Анчах та совет çарĕсем пирĕн укрепленисене çĕмĕрсе тăкрĕç. Çакă вăл пирĕн плансене пурне те пăрахăçа кăларчĕ».

Нимĕçсен 23-мĕш крепостной пулеметлăй батальонĕн тыткăна лекнĕ командирĕ капитан Отто Шундт çапла каласа кăтартнă: «Юлашки çапăçусене пула эпĕ çакна татăклăнах ĕнентĕм: темĕн пекех хăватлă укрепленисем те Германие аркатса тăкасинчен çăлса хăварайрас çук. Темиçе кун хушшинчех вырăссем темиçе чи лайăх крепоçе штурмласа туртса илчĕç. Ман батальонри салтаксем нумайĕшĕ пĕтрĕç. Чĕрĕн тăрса юлнă 30 сынпа пĕрле эпĕ тыткăна парăнтăм».

ИРĔКЕ КАЛАРНА РАЙОНСЕНЧИ ТЕХНИКУМСЕМ

Нимĕçсен фашистла захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă районсенче промышленность, транспорт тата ялхуçалăх техникумĕсем 500 техникум ытла ĕçлеме пуçланă. 290 техникум Украинăра, 20 ытла—Белоруссире, 10—Молдавире, 6 техникум—Карел-Финн республикинче ĕçлеççĕ.

Аркатса тăкнă çуртсене юсас тата вĕренӳ пособийĕсем тăвас ӳçре вĕренекенсем пур çĕрте те активлăн хутшăнса ĕçленĕ. Нумай техникумсем çумĕнче подсобнăй хуçалăхсем организациленĕ.

СССР Совнаркомĕ çумĕнчи Аслă шкул комитечĕн техникумсене ертсе пыракан Главнăй управленийĕ çĕнĕрен ĕçлеме пуçланă техникумсене пĕр миллион учебник ярса парать. (ТАСС).

БЕЛОРУССИН ХЕВЕЛАНАÇ ОБЛАÇЕСЕНЧЕ ШКУЛСЕМ ĔÇЛЕМЕ ПУÇЛАНА

Белоруссия ССР-ĕн Наркомпросĕн коллегийĕ Белоруссин хĕвеланăç облаçĕсенчи шкулсене çĕнĕрен уçасси çинчен сӳтсе-явнă. Хĕвеланăç Белоруссире 3.655 шкул ĕçлеме пуçланă, вĕсенче 430.000 ача вĕренет. Çĕнĕ вĕренӳ çулĕ пуçланнă тĕле çĕнĕрен 80 шкул — вăтам тата пуçламăш шкулсем—туса çитермелле. (ТАСС).

ХРЕСЧЕН ÇАМРĂКĔСЕН КАÇХИ ШКУЛĔСЕМ

Львов облаçĕнче хресчен çамрăкĕсен каç вĕренмелли 200 шкулне уçнă, вĕсенче 18.000 çын вĕренет. Çав шкулсенче чи лайăх учительсем вĕрентеççĕ.

Облаçри комсомолецсем каçхи шкулсем валли 5.000 ытла учебник пухнă тата вута хатĕрленĕ. (ТАСС).

Укерчĕк çинче: Сĕнтĕр районĕнчи Мăн Тутаркас ялĕнчи колхозница Е. Грачева юлташ хăйĕн ачисемпе. Сакăр ача çуратса ӳстернĕшĕн ăна Правительство «Ача амăшĕн мухтавĕ» ятлă II-мĕш степень орденпа наградăланă.

Н. ХРАМОВ фотоукерчĕкĕ.

Çуракине хатĕрленесси—Советсен боевой задачи

Ĕçсыннин депутачĕсен Ростов облаçĕнчи Егорлык районĕнчи Будукалов ял Советĕн çак кунсенче сесси пулса иртнĕ. Çав сесси çуракине мĕнле хатĕрленни çинчен колхоз председателĕсен докладĕсене сӳтсе-явнă. Юлашки докладчик хăйĕн сăмахне пĕтерсенех, пахалăх инспекторĕ Григорий Яковлевич Брык сăмах илнĕ.

— Пирĕн председательсен ĕç питĕ йĕр келлĕ пынă пек тухать,—тесе пуçланă хăйĕн сăмахне Брык.—анчах эпĕ, старик, лăплăнайăмастăп. Пăшăрханатăп эпĕ, колхозник юлташсем.

Старике-колхознике мĕн пăшăрхантарнăха? Колхозсем пĕлтĕр начар ĕçленĕ-шим? Çук, Будукалов ял Советне кĕрекен виçĕ колхоз та пĕлтĕр ăнăçлă ĕçленĕ. Вĕсем акакан çĕр лаптăкне вăрçăнченхинчен 400 гектара яхăн ӳстернĕ, хăйсен государство умĕнчи обязательствисене пурнăçланă, çĕршывпа фронта 135.000 пăт тырă панă, вăрлăхсене хывса çитернĕ, ĕçкунĕсем тăрăх эрлессе пама тупăш нумай хатĕрлесе хунă.

Анчах çав виçĕ колхоз вăрçăнченхинчен ак мĕн енĕпе кая юлса пыраççĕ-ха: вĕсем вăрçăнченхи чухлĕ тырпул туса илеймен. Çакă пăшăрхантарать те çитĕ колхоз инспекторĕпе ыра кăмăллă мĕнпур колхозник. сене. Кăçал вĕсем вăрçăнченхи шая çитересшĕн. Акă мĕн пирки çитĕ депутатсем те, ялти активистсем те колхоз руководителĕсем умне пысăк требовани лартнă. Сессире пулнисем кирек мĕн çинчен калаçнă чухне те—вăрлăх пахалăхĕ çинчен-и, инвентаре юсасси çинчен-и, çуртăм вăйĕ çинчен-и, бригадăсен ĕç олăмĕсем çинчен-и,—ялан ялхуçалăх çулĕн тĕп задачи çинчен, вăйлă тырпул туса илесси çинчен шухăшланă.

Будукалов колхозникĕсем вăйлă тырпул туса илме тăрăшни—пирĕн колхоз хресченĕсем çуракине мĕнле шухăш-кăмăллă хатĕрленнине лайăх кăтартса парать. Социализмлă çĕрĕ çинчи работниксен кăçал мĕн тери пысăк задачăсене пурнăçламалла пулассине колхозниксемпе колхозницăсем лайăх ăнланса илеççĕ. Çĕршывпа фронта — апат-çимăç, промышленноçа—чĕртăвар кирлĕ. Колхозсем мĕн чухлĕ ытларах тырпул туса илĕç—çĕршывпа фронта апат-çимăç парса тăрас ыйтусене те çавăн чухлĕ ăнăçлăрах татса пама май пулĕ.

Анчах та вăйлă тырпул вăл çутçанталăкра хăй тĕллĕнех ӳссе лармасть. Ана питĕ тăрăшса ĕçлесе, кĕрешсе илеççĕ. 1945 çулта вăйлă тырпул туса илессине нумай енчен çуракине кăтартуллăн хатĕрленни тата парать. Пирĕн çуракине иртнĕ çулхисенчен лайăхрах хатĕрленĕ пур условисем те пур. Промышленность ялхуçалăхне иртнĕ çулхисенчен ытларах пулăшма пултарать. Пирĕн совет, çĕрĕç, парти работникĕсем тата колхозниксемпе колхозницăсен ытлă массисем вăрçă каларса тăратнă йывăрлăхсене çĕнтерме вĕренсе çитрĕç.

Апла пулсан, пĕтĕм ĕç кунта çуракине кăтартуллăн хатĕрленмешкĕн çав условисемпе усă курма пĕлнипе пулать. Кунта янтĕ пĕтĕмпех ĕçе мĕнле ертсе пынине тата парать. Вырăнти совет, çĕрĕç тата парти органĕсен задачи — вăйлă тырпул туса илессишĕн пыракан кĕрешӳве ертсе пырасси, çуракине тухиччен тумалли мĕнпур ĕçсене кăтартуллăн туса ирттермешкĕн колхозниксемпе колхозницăсене тата МТСсемпе совхозсен рабочийĕсене организацилесси пулса тăрать.

Ĕçсынни депутачĕсен Советĕсем пысра тĕкĕнмелле мар «вак ĕçсем» ялхуçалăхенче çук. Вĕсене пур япала та, пур ĕç те интереслентермелле. Анчах та вĕсен çав вăхăтрах пĕтĕм ĕçĕн ăнăçлăхне тата паракан тĕп ыйтусене манса хăвармалла мар. Çуракине хатĕрленес ĕçре тракторсемпе ялхуçалăх машинисене юсасси тата вăрлăх хывасси—çавăн пек тĕп ыйтусем пулса тăраççĕ.

Çуракине ăнăçлăн ирттересси машинăсене хăçан тата мĕнле юсаса хунинчен килет. Вĕсене кая юлса юсани е лайăх юсаманни—çуракине кая юлса ирттересшĕне, тырă сахалтарах туса илессине пĕлтерет. Тракторсене вăхăтра тата лайăх юсани—çуракине агротехника енчен чи лайăх срокра туса ирттересшĕне тата тырпул ытларах туса илессине пĕлтерет. Советсен руководителĕсен тракторсене вăхăтра та лайăх юсаттарма тăрăшмалла. Тракторсемпе ялхуçалăх машинисене çуракине валли хатĕрлесе хурах тĕлĕшпе февраль уйăхĕ татăклă уйăх пулмалла. Совет работникĕсен кая юлнă МТСсемпе совхозсенче тракторсемпе ялхуçалăх машинисене юсас ĕç мĕнле пыни çине тимлĕн çăвăрăнса пăхмалла, çав кая юлнă МТС-семпе совхозсене кăйри вырăнтан хăлармалли мерăсене палăртса хумалла.

Тракторсемпе ялхуçалăх машинисене юсашни пахалăхне тĕрĕслес ӳçе питĕ тĕплĕ организацилемелле. Ĕçсынни депутачĕсен район Советĕсен исполкомĕсен председателĕсем—юсанă тракторсене пăхса йышăнмалли государство комиссийĕсен председателĕсем пулса тăраççĕ. Вĕсен ĕç çине пĕр енчен çеç, государство енчен çеç пăхмалла. Тракторсене çӳретсе пăхмасăр тата вĕсен вăйне тĕрĕслемесĕр йышăнма юрамасть. Брак тăвакансене хĕрхенсе тăмалла мар, тракторсене кирлĕ пек лайăх юсаттармалла.

Вăрлăх—çуракине хатĕрленнĕ чухне совет работникĕсем пуринчен ытларах çăвăрăнса пăхмалли иккĕмĕш ыйту пулса тăрать. Анчах фактсем çакна кăтартса параççĕ: хăшпĕр облаçсемпе крайсенче совет органĕсем вăрлăх хывасси çине çитĕлĕкĕрсе çăвăрăнса пăхаççĕ-ха. Пирĕн çĕршывăн кăнтăрти пайĕнче çуракине тухасси темиçе кун кăна юлчĕ. Апла пулин те, Краснодарпа Ставрополь крайĕсенче тата Ростов облаçĕсенче вăрлăх 15—20 процент çитмест.

Вырăнти нумай совет руководителĕсем çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе пур мерăсене те йышăнманнин çак фактран та курăнать. Государствăн вăрлăх фондĕнчи вăрлăхсене улăштарма ирĕк пани уйăх та иртрĕ ĕнтĕ. Çав вăрлăхсем вĕсем—чи лайăх вăрлăхсем, сортлă вăрлăхсем, колхозсен вăрлăх участокĕсене акмалли вăрлăхсем пулса тăраççĕ. Анчах нумай колхозсем çав сортлă вăрлăхсене кайса улăштарма тытăнман-ха. Улăштармалли вăрлăха çулсем пăсăличчен, хальхи çуна çулĕпе турттарса кайăн питĕ вырăнлă. Çакă палла: вăрлăхсене улăштарас ӳçе кая хăварни вăл—совет тата çĕрĕç органĕсен айăпĕ пулса тăрать.

Будукалов ял Совечĕн опычĕ çакна кăтартса парать: çуракине хатĕрленес ĕçре Советсем пысăк вырăн ыйăнса тăма пулăшаççĕ. Будукалов ял Советĕнче çуракине мĕнле хатĕрленни çинчен колхоз председателĕсен докладĕсене сӳтсе-явнипе лăпланса ларман. Совет сессийĕ кашни колхоза, ĕçĕн кашни участокне тĕрĕслемелле ятларласа комиссисем туна. Совет сессийĕ, депутатсем сĕннипе, кӳршĕри ял Советне социализмлă ăмăртăва чĕнĕç.

Ял тата район Совечĕсем колхозниксем хушшинче авторитетлă. Советсем ялти активăн калама çук сарлака масси çине тăнса ĕçлеççĕ. Ял Совечĕн сăмахĕ питĕ энтĕмлĕ, ăна пурте итлеççĕ—колхоз руководителĕсем те, ахаль колхозниксем те. Совет начар ĕçлекенсене ятлать пулсан, вăл çынсене тăрăшарах, лайăхрах ĕçлеме çĕклентерет. Çуракине хатĕрленес ĕçе большевикла тата йĕркеллĕн ирттермешкĕн ял тата район Совечĕсен вăйĕпе тулли усă курмалла.

Ĕçсынни депутачĕсен ял Совечĕсемпе район Совечĕсем тата вĕсен руководителĕсем вăрçă вăхăтĕнче ялхуçалăх производствин чи кăткăс ыйтăвĕсене те татса пама пĕлчĕç. Пĕлтĕр вĕсем хăйсен çав пĕлĕвне государствăна тырă парса тытнă чухне лайăх кăтартса пачĕç. Вĕсен хăйсем умĕнче тăракан çĕнĕ задачăсене те чыслăн пурнăçа кĕртесси пирки те иккĕленмелли çук. Советсемпе вĕсен руководителĕсем колхозниксемпе колхозницăсене çуракине кăтартуллăн хатĕрленме организацилĕç, çапла вара кăçал вăйлă тырпул туса илмелли никĕс пулса тăракан çуракине ăнăçлăн ирттерĕç.

(«Известия», февралĕн 6-мĕшĕнчи умстатья).

Çуракине большевикла хатĕрленер:

РЕСПУБЛИКĂРИ МТС-сенче 1945 ÇУЛХИ ФЕВРАЛЕН 1-мĕшĕ ТЕЛНЕ ТРАКТОРСЕМПЕ ВЕСЕНЧЕН КАКАРСА ЕÇЛЕМЕЛЛИ МАШИНАСЕНЕ ЮСАС ЕÇ МЕНЛЕ ПЫНИНЕ КАТАРТАКАН СВОДКА

(1944 çулхи 4-мĕш квартала тата 1945 çулхи январь уйăхĕнче юсанине процентпа кăтартнă).

МТС.сем	Тракторсем юсанă	Трактор плугĕсене юсанă	Сеялкăсем юсана	Культиваторсем юсанă
Краснодармейски	152.0	79.5	86.6	100 0
Шăхасан	145.4	60.8	84.2	70.3
Йĕпреç	140.0	40.8	57.1	82.3
Елчĕк	129,2	38.5	41.3	51.7
Вăрнар	121.4	60.8	70.5	100 0
Ишлей	114.8	39.6	60.0	73.3
Вăрмар	107.1	27.7	25.0	30.0
Сĕнтĕрвăрри	106.6	41.6	41.6	71.4
Комсомольски	106.2	59.5	85.7	100.0
Куславкка	104.0	51.2	50.0	51.5
Элĕк	103.8	55.8	58.8	100,0
Калинино	100,0	32.0	60.0	50,0
Чкаловски	96.6	51.8	60.0	67.8
Шăмăршă	94.7	24.3	52.9	35,2
Сурмайдан	81.6	90,2	80.0	—
Шупашкар	78.2	61.5	45.7	30.7
Канаш	76.4	18.4	25.0	27.7
Хĕрлĕ Чутай	75.0	53.8	53.8	66.6
Улатăр	75.0	19.2	17.9	42.1
Сиява	70,5	32,0	60.0	75.0
Сĕрпÿ	58.3	34.1	25.0	25,6
Первомайски	56.6	46 6	40,0	60,0
Сĕнтĕр	64.1	23.6	58.3	76.9
Октябрьски	45.6	29,6	27.2	—
Тăвай	42.8	60.7	75.0	42.1
Етĕрне	42.8	29.7	41.6	45.4
Кувакино	41.9	50.6	56.2	31.5
Пăрачкав	40 6	47.3	50.7	58.8
Çĕмĕрле	40,0	15.3	13.3	—
Пĕтĕмпе	88,9	45,6	50,2	58.1

РЕСПУБЛИКАРИ КОЛХОЗСЕНЧЕ 1945 ÇУЛХИ ФЕВРАЛЕН 1-мĕшĕ ТЕЛНЕ ЯЛХУÇАЛАХ МАШИНИСЕНЕ ЮСАС ЕÇ МЕНЛЕ ПЫНИНЕ КАТАРТАКАН СВОДКА (процентпа)

Районсем	Плугсем юсанă	Сеялкăсем юсанă
Вăрнар	83,0	94 6
Елчĕк	82.3	98.4
Чурачăк	80.7	95.0
Красноармейски	73.4	100.0
Шăмăршă	65.7	88,8
Канаш	62.5	40,0
Муркаш	62.2	68,7
Комсомольски	61.2	85.8
Шăхасан	58.9	72.8
Сĕнтĕрвăрри	57.0	62.2
Куславкка	51.5	69.2
Вăрмар	51.4	42.0
Кувакино	51.1	70,4
Калинино	49.5	40,8
Чкаловски	46,0	40,3
Сĕрпÿ	45.8	96.6
Улатăр	44.5	46.6
Сĕнтĕр	44.3	87 0
Первомайски	43.3	27.4
Хĕрлĕ Чутай	41,1	100.0
Сĕмĕрле	41,0	91.5
Шупашкар	40.4	72.1
Тăвай	38,8	60,9
Советски	38,3	52,1
Ишлей	38,1	76,9
Пăрачкав	38,0	100.0
Етĕрне	30,0	55,0
Октябрьски	27,0	69,0
Элĕк	23,9	45,0
Йĕпреç	—	—
Пĕтĕмпе	47.4	66,6

Вăйлă тырпулшăн кĕрешĕве тухрăмăр

ВАРНАР. Хурăн-Сур Çармăсри Чапаев ячĕпе тăракан колхоз иртнĕ çул Çĕрпелĕнчи Ленин ячĕпе тăракан колхозпа ăмăртса ĕçлерĕ. Социализмлă ăмăрту договорне тĕрĕсленĕ хыççăн Чапаев ячĕпе тăракан колхоз ăмăрту условийĕсене пĕтĕмпех лайăх пурнăçланă курăнчĕ. Пирĕн колхоз кояркăн 1-мĕшĕ тĕлне мĕапур тырпула çапса пуçтарчĕ, государство умĕнчи парăмсене те парса татрĕ. Çапла вара вăл районри Хисеп хăми çине кĕме тивĕçлĕ пулчĕ.

Украина колхозникĕсемпе колхозницисем Хĕрлĕ Çар фондне планран иртнĕ тырпул пама чĕнсе çырнине пирĕн колхозниксем ăшă кăмăлпа кĕтсе илчĕç. Эпир Хĕрлĕ Çар фондне 1500 пăт тырă, 1740 пăт çĕрулми, 90 пăт пахча-çимĕç патăмăр. Унсăр пуçне Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли 180 пăт махорка туса патăмăр.

Колхоз вылăх-чĕрлĕхрен те пуян. Нимĕç фашисчĕсенчен ирĕке кăларнă облаç. сенчи колхозсене пулăшас шутпа эпир 22 пуç вылăх ярса патăмăр. Вылăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государство планне пур енĕпе те тултарнă. Вылăхсене хĕл каçма лайăх майсем туса патăмăр. Витесем ăшă та çутă. Вылăхсем валли тырпул, утă-улăм июнĕн 1-мĕшĕ тĕлне çитмелĕх уйăрнă. Кунсăр пуçне 215 тонна силос тата тымар-çимĕçсем çылай пур. Вылăк витисенче лайăх ĕçке тунă, зоотехникăпа ветеринари кăтартăвĕсене çирĕп пурнăçласа пыратпăр. Вылăх пăхакансем хăйсен ĕçне юратса тăваççĕ. В. Ананьева, Ф. Михайлов, А. Кондратьева конюхсем лашасене лайăх пăваççĕ. Вĕсем пăхакан лашасем вăйлă, мăнтăр та таса. Тасалăх—иккĕмĕш япат, теççĕ вĕсем.

Хальхи вăхăтра кашни кунах çамрăк вылăхсем хутшăнаççĕ. Паянхи куна 26 пăру, 41 путек, 100 ытла сысна çури илнĕ те ĕнтĕ. Вĕсем пурте лайăх çитĕнеççĕ. Çамрăк вылăхсене пăхма ĕçе юратакан лайăх колхозниксене уйăрнă.

Çĕрпелĕнчи çичĕ çул вĕренмелли шкул ачисем çамрăк вылăхсене шефа илнĕ. Вĕсем фермăра ĕçлекенсене пулăшаççĕ, кĕнеке-хаçатсем вуласа параççĕ.

Пирĕн умра татах та пысăкрах задача тăрать. Кăçал та пирĕн вăйлă тырпул туса илмелле, пысăк тухăçлă вылăх-чĕрлĕх çитĕнтермелле. Пирĕн колхозниксемпе колхозницăсем вăйлă тырпулшăн кĕрешĕве тухрĕç те ĕнтĕ. Пур çĕрте те ĕç вĕресе тăрать. Колхозниксем иртен пуçласа каçчен выăнма пĕлмесĕр ĕçлеççĕ. Колхозниксемпе туртăм вăйпе участоксем тăрăх тĕрĕс вырнаçтарса тухнă. Çитес çуркунне акмалли 670 центнер вăрлăха сортласа хунă. «Мĕн акатăн—çавна выратăн», теççĕ ватă колхозниксем. Çакна асра тытса, 15 центнер пăрçана алăпа суйласа тасатнă. Пур тĕрлĕ вăрлăхсене те 1-мĕш класлă кондицие лартнă. Кăçал пирĕн колхоз 2 центнер ытла махорка вăрлăхĕ туса илчĕ. Вăл хăмăр валли те, государствăна пама та çитĕклĕ пулчĕ.

Колхоз тимĕрçи Ф. Васильев юлташ плугсемпе ытти машинăсене юсас тĕлĕшпе çине тăрса ĕçлет.

Вырăнти удобренисене пухса хатĕрлес енĕпе те пысăк ĕçсем турăмăр. Бригадăсем пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ. Пурĕ эпир 4000 лав тислĕк хире кăларнă. Уйрăмăнах 3-мĕшпе 4-мĕш бригадăсем (бригадирĕсем Афанасьевăпа Ефимов юлташсем) мăлта пыраççĕ. Кĕл, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ, фекали хатĕрлес ĕçре пире канăкул вăхăтĕнче шкул ачисем нумай пулăшрĕç, пушă вăхăтра халь те пулăшаççĕ. Паянхи кун тĕлне пирĕн колхоз 70 центнер кĕл, 46 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухса хунă. Çĕре мĕн чухлĕ удобрени парăн, çавăн чухлĕ ытларах тырпул пухатăн, теççĕ пирĕн колхозри ватă çынсем. Вăтисен сăмахне асра тытса, эпир мĕпур пек удобренне тĕплĕн пухса хатĕрлеме тăрăшатпăр.

Хĕрлĕ Çар 27 çул тултарас кун сывхарать. Çав кунах пирĕн Чапаев ячĕпе тăракан колхоза организацилеĕренне те 15 çул çитет. Пирĕн колхозниксем çав паллă кун тĕлне çуракине пур енчен те хатĕрленсе çитессишĕн ăмăртса ĕçлеççĕ.

П. КОВСКИЙ.

Чапаев ячĕпе тăракан колхозри 6-мĕш бригадăн бригадирĕ.

Парти пурнăçĕ

Коммунистсем вăрманпромхоз ĕçне лайăхлатма пулăшаççĕ

Йĕпреç вăрманпромхозĕ, 1944 çулта вăрман хатĕрлесе турттармалли плана итлаш. шипех тултарса, республикăра пĕрремĕш вырăна тухрĕ. Вăрманта ĕçлекенсем хушшинче стахановецсен йышĕ пысăк. Вĕсенчен 7 çынна Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотине парса наградăланă тата 14 çынна премипа панă.

Вăрманпромхоз ĕçне лайăх йĕркелес тĕлĕшпе парторганизаци тимлĕн тăрăшать. Парторганизацинче 28 коммунист, вĕсем хăйсен ĕçне тĕрĕ кăмăлпа туса пыраççĕ. Кăшмас Туçа вăрман пункчĕн начальникĕпе технорукĕ—иккĕшĕ те коммунистсем. Вĕсем ертсе пыракан вăрман пункчĕ иртнĕ çулхи тăваттăмĕш кварталта чугун çул валли вутă хатĕрлемелли плана 110 процент, турттармалли плана 116 процент тултарчĕ, çапла вара вăрманпромхозри куçса çÿрекен Хĕрлĕ Ялавăпа илме тивĕçле пулчĕ. Коммунист П. Чипков юлташ мастер пулса ĕçлет. Вăл хăйĕн участокĕн çулталăкри планне вăрман касса хатĕрлес тĕлĕшпе 122 процент тултарса, «Лучшему мастеру» ятлă пĕчĕк ялава илнĕ. Коммунист А. Павлов ертсе пыракан стахановла бригада вăрман касмалли хулленхи нормăна 200—250 процент тултарса пырать. Павлов юлташ 4 çынна стахановла методпа ĕçлеме вĕрентсе çитерчĕ. Шофер Воронов парторганизаци хушнипе 4 çынна шофера вĕрентет.

Парторганизаци рабочисемпе таччăн çыхăнса ĕçлет. Ĕçри çитменлĕхсем çинчен пухусенче сÿтсе-явăççĕ, вĕсене пĕтерме пулăшаççĕ. Иртнĕ çулта кунта коммунистсен пухăвĕсем 14 хутчен пулнă. Вĕсенче вăрман хатĕрлес ĕç мĕнле пыни çинчен 8 хутчен сÿтсе-явнă. Пухура хыр касакансем хушшинче социализмлă ăмăтăла янлăн сарса ямă, вĕсем валли лайăхрах условисем тума, ĕç вăйĕ хушса пама йышăннă. Вăрман ĕçлекенсем хушшинче агитмассăллă ĕçе сарса янă, пурнăç условийĕсене лайăлатнă. Çакăн хыççăн хыр хатĕрлемелли плана 190 процент таран тултарнă.

Парторганизаци коммунистсемпе партире тăман рабочисен политикăллă пĕлĕнне ÿстерес тĕлĕшпе те лайăх ĕçлет. 22 коммунист политшкулта вĕренеççĕ, вĕсем Сталин юлташăн историллĕ докладĕпе приказне вĕренсе пĕтернĕ, халĕ ВКП(б) историйĕн кĕске курсне вĕренеççĕ. 6 коммунист Ленинпа Сталин произведенийĕсене хăйсем тĕллĕн вĕренеççĕ. Сталин юлташăн докладне вăрман ĕçлекенсене вĕрентес тĕлĕшпе 5 кружок тунă, занятисене коммунистсем ертсе пыраççĕ. Вăрман пункчĕсенче пĕр клуб тата 3 хĕрлĕ кĕтес ĕçлет. Политикăлла-массăллă ĕçе лайăх туса пыни малта пыракан рабочисене парти ретне хутшăнтарма нумай пулăшрĕ. Иртнĕ çулта ВКП(б) членĕн кандидачĕсен ретне 7 çын, тата 9 çынна парти членне илнĕ.

Вăрманпромхозра ĕçлекенсем 1945 çулхи пĕрремĕш квартал планне пур тĕлĕшпе те тултарма обязательство илчĕç. Вĕсем хăйсен обязательствине пурнăçа кĕргесшĕн тăрăшса ĕçлеççĕ. Çав ĕçре вĕсене парти организацийĕ те нумай пулăшать. Вĕсем Вăрнар вăрманпромхозне социализмлă ăмăртăва чĕнчĕç.

Парторганизаци ĕçĕнче çитменлĕхсем те пур-ха. Парти ретне малта пыракан рабочисен шучĕпе ÿстересси çителĕксĕр пырать. Кунта ялан ĕçлекен кадровăй рабочисем сахал мар пулсан та, вăрман касакансенчен пĕр çынна çеç парти ретне илнĕ. Çавăн пекех комсомол организацийĕ те çителĕксĕр ĕçлет. Вăрманта ĕçлекенсем хушшинче лайăх ĕçлекен çамрăксем нумай. Вĕсене комсомол ретне сахал явăстараççĕ. Партипе комсомол организацийĕсем вăрман ĕçлекенсем хушшинче политикăллă-массăллă ĕçе тата лайăхрах туса пырсан, вăрман хатĕрлемелли плана срокчен тултарма çителĕк. лĕ майсем пур.

М. МАРКОВ.

Колхозăн ревизи комиссийĕ ĕçлемест

Çĕрпÿ районĕнчи Янзакасси ялсоветĕнчи «Канаш» колхозра çулталăкри ĕçсен. отчетне тума хатĕрленеççĕ. Колхоз пурлăхне инвентаризацилесе пĕтернĕ. Халĕ складсенчи тырăсене тĕрĕслеççĕ. Çак вăхăтра ревизи комиссийĕн пикенсех ĕçлемелле. Анчах та ревизи комиссийĕ тырă виçнĕ çĕре хăйĕн представительне памарĕ. Ревизи комисси членĕ Антонов юлташ 1941 çултанпах ревизи «тăвать», анчах та ревизи комисси хăйĕн ĕçĕ çинчен колхозниксен умĕнче нихçан та отчет туса паман. ревизи комиссин акчĕсене çак вăхăта çитсе те никам та курман.

1944 çулта, колхозниксен пухăвĕ йышăнă тăрăх, Хĕрлĕ Тури çичĕ çул вĕренмелли шкула 1,5 гектар çурă сĕре колхоз акса пачĕ. Унсăр пуçне, колхозниксен пухăвĕ йышăнмасăрах, шкул директорĕ З. Титова хушнипе, шкул 1,5 гектар ыраш вырса кĕнĕ тата ăна пĕр лав çĕрулми леçсе панă. Çаксене нимĕнле кĕнеке çине те кĕртмен. Колхозниксем çакăн пек ытту параççĕ: 1,5 гектар ыраш тыррине, улăмне тата пĕр лав çĕрулмие мĕнле расходланă? Колхоз пурлăхĕшĕн—колхозниксем хуçа. Колхоз правлени мĕнле ĕçленине колхозниксем суйланă ревизи комиссийĕ тĕрĕслесе тăмалла. Анчах пирĕн ревизи комиссийĕ нимĕн те пелмест тата пĕлме те тăрăшмасть.

П. КОРНИЛОВ

Çамрăксен ĕçĕсем

Стахановла ĕçĕн результачĕсем

ИШЛЕЙ. «Акăра» колхозăн сĕт-çу ферминче чылай çул хушши Д. Долгова юлташ ĕçлет. Вăл хăйне шанса панă ĕçе тÿрĕ кăмăлпа, юратса тăвать, вootехника правилисене тĕрĕс пурнăçласа пырать. Иртнĕ çулхипе танлаштарсан, Долгова юлташ ĕнесенчен сĕт суса илессине чылаях ÿстерчĕ. Ун çумне сăвакан ултă ĕне çирĕплетнĕ. 1944 çулхи 12 уйăх хушшинче вăл кашни ĕнинчен план тăрăх 1.100-шер литр вырăнне 1.338-шер литр сĕт илнĕ.

Долгова юлташ ĕнесене лайăх пăхать, вăхăтра тасатать, апатлантарать, шăварать. Апата яланах виçеллĕ тата перекетлесе тыткалать.

Хăй çумне çирĕплетнĕ ĕнесене Долгова юлташ пурне те чунтарса хăварнă, кашни пăрăва лайăх пăхса илнĕ. Государствăна сĕт-çу памалли обязательствăна вăхăтра татнă. Ĕçшĕн хушса тÿлемелли ĕçке тăрăх Долгова юлташ 434 литр сĕт илнĕ.

Чăваш АССР-ĕнчи колхозсенче çамрăк вылăхсене пăхса ÿстерес тата çитĕннĕ вылăхсене сыхласа хăварас тĕлĕшпе пани заданисене ирттерсе пурнăçланăшăн колхозниксене хушса тÿлесси çинчен кăларнă закона сÿтсе-явнă хыççăн Д. Долгова юлташ 1945 çулта кашни ĕнерен 1.400-шер литр сĕт суса илме пулчĕ.

Çак колхозăн сурăх ферминче ĕçлекен К. Чернова юлташ та ĕçре паха тĕслĕхсем кăтартать. Вăл та сурăхсене юратса пăхать. Иртнĕ çул план тăрăх кашни сурăхран 2,3 килограмм вырăнне 3,85 килограмм çăм касса илнĕ. Чернова юлташ ĕçшĕн хушса тÿлемелли ĕçке тăрăх 4,2 килограмм çăм илет.

Колхоз вылăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана пĕтĕмпех ирттерсе тултарнă. 1945 çулхăн государствăна аш-какай парса татнă. Çăмартана сĕт-çу аванс шучĕпе иртнĕ çулах панă. «Акăра» колхоз вылăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе «Агроном» колхозпа ăмăртса ĕçлет.

Зоотехник Е. ФИЛИППОВА.

РЕСПУБЛИКА ТĂРĂХ

8 АЧА ÇУРАТНА

Куславкка районĕнчи «Красная Заря» колхозри колхозница Анастасия Александровна Егорова юлташăн 6 ача пулнă. Нумаях пулмасть Егорова юлташ 3 йĕкĕреш ача çуратнă. Ача амăшĕн тата халĕ çуралнă ачасен сывлăхĕсем авăн

Çак кунсенче Куславкка райсовет исполкомĕ А. А. Егорова юлташа 8.500 тенкĕ укçа парса пулăшнă.

ПЫСАК ВЫЛЯВСЕМ

Шăхасан районĕнчи Ушанарти Калинино ячĕпе тăракан колхозри колхозница Е. Кузнецова юлташ çак кунсенче Государствăн Иккĕмĕш Военнăй Заемĕн 200 тенкĕлĕх облигацийĕпе 10.200 тенкĕ выляса илнĕ.

Вăрнар поселокĕнче пурăнакан А. Бухарина юлташ çак заемăн 100 тенкĕлĕх облигацийĕпе 5000 тенкĕ выляса илнĕ.

1000 МЕТР ПИР-АВАР СУТНА

КУКЕÇ. СССР Верховный Совет Президиумĕн 1944 çулхи июлĕн 8-мĕшĕнче йышăннă Указ тăрăх, районри суту-илÿ организацийĕсем, 1944 çулхи декабрь уйăхĕнчен пуçласа 1945 çулхи февраль уйăхне çитиччен, ача амăшĕсене хăйсен çĕнĕрен çуралнă ачисем валли кĕпе-тумтир çĕлетме 1.000 метр ытла пир-авăр сутнă.

ПĔР ЕНЕРЕН ИКЕ ПĂРУ

КАНАШ. Вăтакас Шăмăшри Чкалов ячĕпе тăракан колхоз членĕн Г. Савельев юлташăн ĕни икĕ пăру туса панă. Пăрусенчен пĕри—вăхăр, тепри—тына. Иккĕшĕ те сывă тата лайăх çитĕнеççĕ.

Красноармейски районри «Жнейка» колхоз иртнĕ çул ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн вĕçлерĕ. Колхоз бригадирĕсем пулса унта П. И. Иванов (Отечественнăй аслă вăрçă инваличе) тата В. И. Иванова юлташсем ĕçленĕ. Иванов юлташăн пултарулăхне кура, ăна халĕ Байсубино ялсовет председателĕ пулма суйланă.

Укерчĕк çинче: «Жнейка» колхоз членĕсем **П. Иванова В. Иванова** юлташсем.

ЭЛЕКТРОСТАНЦИ ТАВАÇÇĔ

Калинино районĕнчи Çавалкассинчи «Сутталла» колхоз членĕсем Чăваш республики 25 çул тултарнă тĕле электростанци туса пĕтерме йышăннă. Электростанци тума кирлĕ строительство материалĕсене хатĕрлесе тата кÿрсе çитернĕ. Халĕ электростанцин пурине туса пĕтереççĕ. Сурăн таврашĕ 15 метр, сарлакăш 8 метр пулать Колхозри электростанцин шалти оборудованине майлаштарма тата уйрăм пайĕсене вырнаçтарма Çĕмĕрле хулинчи промышленность предприятийĕсем пулăшаççĕ.

УЧИТЕЛЬСЕМ ДОКЛАД ТАВАÇÇĔ

ВĂРМАР. Хорупĕнчи çичĕ çул вĕренмелли шкулта ĕçлекен учительсем колхозниксем хушшинче лайăх ĕçлеççĕ. Вĕсем яланах докладсемпе калаçусем туса ирттереççĕ. «В. И. Ленин пурнăçĕпе ĕçĕсем», «Пысăк пахалăхлă вăрлăх туса илесси» ятлă темăсемпе калаçусем ирттернĕ. Çурккуннечен «Чăваш литературин аталанăвĕ», «Семье пуçланса кайни», «Çĕрĕн историйĕ» тата ытти темăсемпе те докладсем тума пăхнă. Докладсене шкулти учительсем: Миронова, Герасимова, Шипкина, Андриянова, Смелова, Львова, Григорьев юлташсем тăваççĕ.

КАУЧУКОВОДСЕН СЕМИНАРĔ

Шупашкарта кок-сагыз туса илес енĕпе ĕçлекен агрономсен пилĕк кунлăх семинарĕ пуçса иртрĕ. Семинартан пĕтĕмпе 59 çын вĕренсе тухнă. Семинара Расткаучук конторин главнăй агрономĕ Никитин, Чăваш АССР Сĕрĕк Халăх Комиссариатĕнчĕн кок-сагыз туса илес енĕпе ĕçлекен управленийĕн начальникĕ Соколов. Расткаучук конторин управляющийĕ Ефимов юлташсем ертсе пынă. Районсенче халĕ кок-сагыз акакан колхозсен звеновочĕсен курсĕсем пуçса иртеççĕ.

ОРКЕСТР ОРГАНИЗАЦИЛЕНЕ

Хĕрлĕ Чутайри вăтам шкулта струнлă оркестр организациленĕ. Оркестра çак шкулти учительница М. Л. Майогова юлташ ертсе пырать. Оркестр занятийĕсем расписани тăрăх пулса иртеççĕ. Кунта выс тата чăваш юррисене выляма вĕренеççĕ.

Нумаях пулмасть çак оркестр учительсен районри конференцийĕнче тата вĕренсенсен ашшĕ-амăшĕсен пухăвĕнче концерт панă

Вăйлă тырпулшăн кĕрешĕве тухрăмăр

Çĕрпÿ районĕнчи Кăшаркасси ял Советĕнчи колхозсем иртнĕ çулхи ялхуçалăх çулне ăнăçлăн вĕçлерĕç. Вĕсем хальхи вăхăтра çитес çуракине тĕплĕн хатĕрленеççĕ. Кашни колхозрах вăрлăх фондне çителĕклĕ уйăрса хăварнă. «Пионер» тата Буденный ячĕпе тăракан колхозсем вăрлăхсене сортласа тасатнă. Вĕсен пахалăхне районри лабораторире тĕрĕслесе пăхнă. Шăрлăх участокĕсем çине акмалли пăрçана, пулла тата урпана алăпа суйласа, уйăрăм складсене хунă. Паянхи куна «Пионер» колхозра 1740 лав, Буденный ячĕпе тăракан колхоз 930 лав тислĕк кăларнă. Ку ĕçре вăкăрсемпе анлăн усă кураççĕ.

Вырăнти удобренисене ытларах хатĕрлессишĕн «Пионер» колхозра колхозниксемпе колхозницăсем ăмăртса ĕçлеççĕ. Кашни хуçалăх хĕл каçиччен 3 центнертан кая мар кĕл, пĕр центнертан кая мар кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ, 50 лавран кая мар тислĕк хатĕрлеме обязательство илнĕ. Колхозниксемпе колхозницăсем хăйсем патне обязательствăна пурнăçлама тытăнчĕç. Колхозри 200 хуçалăхран пĕтĕмпе 400 центнер кĕл, 80 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухнă. Колхоз пухнă кĕле типĕ вырăна тирпейлесе хунă.

«Пионер» колхозри тимĕрçĕсем Семенов, па Марков юлташсем ялхуçалăх машинисене юсаççĕ. Колхоза кирлĕ 28 плуга, сÿресене, 6 сеялкăна юсаса юр кĕмеи сарайне лартнă. Колхозри мĕпур лашасем мăнтăр та вăйлă.

Кашни колхозра агротехникăллă мероприятисен планĕ пур. Ана çине тăрса пурнăçласа пыраççĕ.

А. ИВАНОВ.

Çĕнтĕрвăрри районĕнче

ЯЛХУÇАЛАХ ПРОДУКЦИЙĔН ПЛАНĔ ВЫРĂНА ТУХРĂ

Çĕнтĕрвăрри районĕнче 1944 çулхи ялхуçалăх продукцийĕн планĕ вырăна тухрĕ. Районăн 20 колхозĕ, 2 совхозĕ, 3 МТС-ĕ, 2 машина-тракторлă станцийĕ, 2 сĕт заводĕ, 2 маслă заводĕ, 2 ремонт мастерскойĕ, 2 электростанци, 2 элеватор, 2 крупорушка, 2 мукомол завоцĕ, 2 хлебозавод, 2 пекарня, 2 мясокомбинат, 2 кожевенно-обувной завод, 2 сапожно-пимокатно-шубно-шапочно-рукавичная мастерская, 2 сапожно-пимокатно-шубно-шапочно-рукавичная артель